27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945
ФЕВРАЛЬ
14
ЮНКУН
29(6780) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛАСОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Союзлă виçĕ державăн—Совет Союзĕн, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен тата Великобританин—руководителĕсен Крымра пулса иртнĕ Конференцийĕ

Юлашки сакăр кун хушшинче Крымра союзлă виçĕ держава руководителĕсен—Великобритани Премьер-Министрĕн У. Черчилль господинăн, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Президенчĕн Ф. Д. Рузвельт господинăн тата СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕн И. В. Сталинăн конференцийĕ пулса иртнĕ, конференци ĕçĕсене Ютçĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсем, Штабсен Начальникĕсем тата ытти советниксем хутшăннă.

Виçĕ правительствăн пуçлăхĕсемсĕр пуçне, конференцире çак çынсем пулнă:

Совет Союзĕ енчен—СССР Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов, Тинĕс-Çар Флочĕн Халăх Комиссарĕ Н. Г. Кузнецов, Хĕрлĕ Çарĕн Генеральнăй Штаб Начальникĕн Заместителĕ Арми генералĕ А. И. Антонов, СССР Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕсем А. Я. Вышинскипе И. М. Майский, Авиаци маршалĕ С. А. Худяков, Совет Союзĕн Великобританири Посолĕ Ф. Т. Гусев, США-ри Посол А. А. Громыко;

Пĕрлешӳллĕ Штатсем енчен—Государство Секретарĕ Э. Стеттиниус, Президент Штабĕн Начальникĕ Флот адмиралĕ В. Леги, Президентăн Специальнăй Помощникĕ Г. Гопкинс господин, Çар Мобилизаци енĕпе ĕçлекен Департаментăн Директорĕ Дж. Бирнс судья, Америка Çар Штабĕн Начальникĕ Арми генералĕ Дж. Маршалл, США Тинĕс-Çар вăйĕсен Главнокомандующийĕ Флот адмиралĕ Э. Кинг, Америка Çарĕн Снабжени Начальникĕ Б. Сомервелл генерал-лейтенант, Тинĕс-Çар Çулĕсем енĕпе ĕçлекен Администратор Е. Ланд вице-адмирал, Л. Кутер генерал-майор, Пĕрлешӳллĕ Штатсен ССР Союзĕнчи Посолĕ В. Гарриман господин, Государство Департаменчĕн Европăри Отделĕн Директорĕ Ф. Маттьюс господин, Государство Департаменчĕн ятарласа политика ĕçĕсем тĕлĕшпе ĕçлекен канцеляри Директорĕн Заместителĕ А. Хисс господин, Государство Секретарĕн Помощникĕ Ч. Болен господин, çак асăннă çынсемпе пĕрле тата политика, çар, техника советникĕсем пулнă;

Великобритани енчен—Ютçĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ А. Иден господин, Çар Транспорчĕн Министрĕ Лезерс лорд, Великобританин ССР Союзĕнчи Посолĕ А. Керр господин, Ютçĕршыв Ĕçĕсен Министрĕн Заместителĕ А. Кадоган господин, Çар Кабинечĕн Секретарĕ Э. Бриджес господин, Импери Генеральнăй Штабĕн Начальникĕ А. Брук фельдмаршал, Сывлăш-Çар Вăйĕсен Штабĕн Начальникĕ Авиаци маршалĕ Ч. Портал, Тинĕс Ĕçĕсен Пĕрремĕш Лорчĕ Флот адмиралĕ Э. Кенингхем, Оборона Министрĕн Штаб Начальникĕ Г. Измей генерал, союзниксен Вăтаçĕр Тинĕс çинчи вăрçă ĕçĕсен Верховнăй Командующийĕ Александер фельдмаршал, Британин Вашингтонри Çар Миссийĕн Начальникĕ Вильсон фельдмаршал, Британин Вашингтонри Çар Миссийĕн членĕ Сомервилл адмирал, çак асăннă çынсемпе пĕрле тата çарпа дипломати советникĕсем пулнă.

Крымри Конференци ĕçĕсен результачĕсем çинчен США Президенчĕ, Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ тата Великобританин Премьер-Министрĕ çакăн пек пĕлтереççĕ:

I.

Германие çапса аркатасси

Эпир пĕрлехи тăшмана пуçĕпех çапса аркатас тĕлĕшпе союзлă виçĕ державăн вăрçă планĕсене пăхса тухса палăртса хутăмăр. Союзлă виçĕ нацин çар штабĕсем Конференци пынă мĕнпур тапхăрта кулленех канашлусенче тĕл пулса пычĕç. Çав канашлусем пур енчен те питех те çителĕклĕ пулчĕç тата вĕсем виçĕ союзникăн вăрçăри вăйĕсене халиччен нихăçан пулман пек таччăнрах пĕтĕçтерсе йĕркелесси патне илсе пычĕç. Союзниксем пĕр-пĕрне вăрçă ĕçĕсем çинчен чи тулли информацисем пачĕç. Пирĕн çарсем тата сывлăш-çар вăйĕсем Германи чĕрине хĕвелтухăçĕнчен, хĕвеланăçĕнчен, çурçĕртен, кăнтăртан çĕнĕрен татах та хăватлăнрах пырса çапассин срокĕсене, çавăн пек пырса çапмалли вăйсен пысăкĕшĕсене тата çав ĕçĕн йĕркисене тĕплĕн палăртса хунă, ку тĕлĕшпе пĕтĕмĕшпех калаçса татăлнă.

Вăрçă тĕлĕшĕнчи пирĕн пĕрлехи плансем мĕнле пулни эпир вĕсене пурнăçа кĕртсен тин паллă пулса тăрĕ, анчах эпир çакна çирĕп шанса тăратпăр: пирĕн виçĕ штаб çак конференцире çав тери таччăн пĕрлешсе ĕçлеме тытăнни вăрçа хăвăртрах пĕтерме май парĕ. Пирĕн виçĕ штабăн канашлăвĕсем, кирлĕ пулса тăрсан, кашнинчех малалла çĕнĕрен ĕçлеме тытăнĕç.

Нацистла Германи пĕтсе ларас шăпа умĕнче тăрать. Германи халăхĕ, малалла та хирĕç тăма хăтланса, çак пачах та шанчăксăр ĕçе малалла туса пыма хăтланса, хăй поражени тӳсессин хакне хăйшĕн хăй татах та ытларах йывăрлатĕ.

II.

Германи çĕрне оккупацилесси тата ăна контроллесе тăрасси

Германие пĕр сăмахсăрах парăнтармалли условисене ирĕксĕрлесе пурнăçа кĕрттерес пĕрлĕхлĕ политикăпа плансем тĕлĕшпе эпир калаçса татăлтăмăр. Германи пире хирĕç хĕçпăшалпа тăнине татăклăнах çапса аркатнă хыççăн нацистла Германи умне эпир çав условисене пĕрле тăратăпăр. Германие пуçĕпех çапса аркатиччен эпир çав условисене пичетлесе кăлармастпăр. Калаçса татăлнă план тăрăх, виçĕ державăн хĕçпăшаллă вăйĕсем Германире уйрăм зонăсем йышăнĕç. План тăрăх пĕр-пĕринпе килĕштерсе йĕркеленĕ администрацине контроль туса хурассине палăртнă. Çав ĕçе Центрти Контроль Комиссийĕ урлă туса пымалла пулать, вăл Комисси виçĕ державăн Главнокомандующийĕсенчен тытăнса тăрать. Çав Центрти Контроль Комиссийĕ Берлин хулинче вырнаçса тăмалла пулать. Çакăн пирки калаçса татăлнă: Франци хăй çине оккупаци зонине йышăнма тата Контроль Комиссийĕн тăваттăмĕш членĕ пулса ĕçлеме кăмăл тусан, виçĕ держава Францие те çак ĕçе хутшăнма чĕнеççĕ. Францин зони мĕн пысăкĕш пуласси пирки çак ĕçпе интереслекен тăватă Правительство хăйсен Европăри Консультаци Комиссийĕнчи представителĕсем урлă калаçса татăлаççĕ.

Пирĕн ниçталла пăркаланмалла мар тĕллев—Германи милитаризмĕпе нацизмне пĕтерсе тăкасси тата Германие пĕтĕм тĕнчери мирлĕ пурнăçа урăх нихăçан та пăсмалла мар туса хурасси пулса тăрать. Эпир Германин мĕнпур хĕçпăшаллă вăйĕсене хĕçпăшалсăрлантарма тата салатса яма çирĕп йышăнтăмăр, эпир Германин генеральнăй штабне, Германири милитаризма чĕрĕлсе ура çине тăма пĕр хутчен мар пулăшнăскерне, яланлăхах пĕтерсе тăкма, Германин мĕнпур çар оборудованине туртса илме е пĕтерсе тăкма, Германин мĕнпур çар промышленноçне, вăрçă хатĕрĕсем туса кăларас ĕçре усă курмалла пулма пултараканскерне, пĕтерсе тăкма е ăна контроллесе тăма; вăрçăшăн айăплă мĕнпур çынсене тĕрĕс те хăвăрт наказани пама тата нимĕçсем тунă аркатусемпе тăкаксемшĕн натурăпа шыраса илме; нацистсен партине, нацистла законсене, нацистла организацисемпе учрежденисене çĕр çинчен пĕтĕмпех шăлса пăрахма; Германири общественлă учрежденисенчен, Германи халăхĕн культурăллă тата экономикăллă пурнăçĕнчен нацистсемпе милитаристсен кирек мĕнле влиянине те шăлса кăларма тата пулас миршĕн, пĕтĕм тĕнчери хăрушсăрлăхшăн кирлĕ пулса тăма пултаракан çавăн пек ытти тĕрлĕ мерăсене те Германи тĕлĕшпе пĕрле йышăнма çирĕп палăртса хутăмăр. Пирĕн тĕллевсене Германи халăхне пĕтерсе тăкасси кĕмест. Нацизмпа милитаризма тымарĕпех кăкласа пăрахсан тин Германи халăхĕшĕн тивĕçлĕ пурнăçпа пурăнма шанчăк пулса тăрĕ, çавăн хыççăн тин ун валли халăхсен пĕрлешĕвĕнче вырăн пулĕ.

III.

Германирен вăрçă тăкакĕсене шыраса илесси

Эпир Германи çак вăрçăра союзлă çĕршывсене кӳнĕ сиенсем çинчен сӳтсе-яврăмăр та Германие çав сиенсемшĕн май килнĕ таран туллирех натурăпа тӳлеттермелле тунин тĕрĕс пулать тесе йышăнтăмăр.

Вăрçă тăкакĕсемшĕн тӳлеттерес тĕлĕшпе ĕçлеме союзниксем Комисси тăваççĕ. Çав Комиссие Германи союзлă çĕршывсене кӳнĕ тăкаксемшĕн унăн мĕн чухлĕ тӳлемелле пуласси пирки тата тӳлеттермелли майсем пирки тăракан ыйтусене пăхса тухма хушаççĕ. Комисси Мускавра ĕçлемелле пулать.

IV.

Пĕрлешнĕ Нацисен Конференцийĕ

Эпир хамăр союзниксемпе пĕрле мирпе хăрушсăрлăха тытса тăрас тĕлĕшпе ĕçлеме пĕтĕм тĕнчери пĕтĕмĕшлĕ организацие пыйвăх вăхăтрах тума шутларăмăр. Çакă вăл çĕнĕ агресси пуласине сирсе яма та, çавăн пекех тата вăрçăн политикăллă, экономикăллă тата социаллă сăлтавĕсене яланах мире юратакан мĕнпур халăхсемпе пĕрле ĕçлесе пĕтерсе пыма та кирлĕ тесе шутлатпăр эпир.

Çав ĕçĕн никĕсне Думбартон-Оксра хывнă. Анчах та сасăлас йĕркесем тĕлĕшпе тăракан паха ыйту пирки унта калаçса татăлайман. Çак Конференцире ку йывăрлăха татса пама май килчĕ. Эпир çакăн пирки калаçса татăлтăмăр: 1945 çулхи апрелĕн 25-мĕшĕнче Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчи Сан-Франциско хулинче Пĕрлешнĕ Нацисен Конференцине пухмалла пулать. Çав Конференцире, Думбартон-Оксри официальнăй йĕркепе мар пулса иртнĕ калаçусем вăхăтĕнче тунă положенисем тăрăх, пĕтĕм тĕнчери организацин Уставне туса хатĕрлемелле.

Ку тĕлĕшпе Китай Правительствипе тата Францин Вăхăтлăх Правительствипе халех калаçса татăлмалла тунă тата вĕсем патне Пĕрлешӳллĕ Штатсен, Великобританин, Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Правительствисемпе пĕрле асăннă конференцие ытти çĕршывсене чĕнес ĕçе хутшăнма чĕнӳ яратпăр.

Китайпа тата Францие калаçса татăлсанах, сасăламалли йĕркесем çинчен калакан сĕнӳсен текстне пичетлесе кăларатпăр.

V.

Ирĕке кăларнă Европа çинчен калакан декларации

Эпир ирĕке кăларнă Европа çинчен калакан Декларацие çырса алă пусрăмăр. Çав Декларацире ирĕке кăларнă Европăри политикăпа экономика ыйтăвĕсене демократиллĕ принципсем тăрăх татса парас ĕçе виçĕ державăн политикине пĕр-пĕринпе килĕштерсе пĕтĕçтерессине тата вĕсем пĕрле ĕçлессине палăртса хунă. Аялараххра çав Декларацин текстне пичетлетпĕр:

«Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Премьерĕ, Пĕрлешӳллĕ Королевствăн Премьер-Министрĕ тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Президенчĕ хăйсен çĕршывĕсенчи халăхсен тата ирĕке кăларнă Европăри халăхсен пĕрлĕхлĕ интересĕсем тĕлĕшпе пĕр-пĕринпе канашланă. Вĕсем, пĕрле пулса, çакăн çинчен пĕлтереççĕ: нацистла Германи пусмăрĕнчен ирĕке кăларнă халăхсене тата Европăри тĕнĕл сателличĕсем пулнă государствăсен халăхĕсене вĕсен политикăпа экономика тĕлĕшĕнчи чи кирлĕ ыйтăвĕсене демократиллĕ майсемпе татса парас ĕçре пулăшас тесе, виçĕ державăн руководителĕсем ирĕке кăларнă Европăри хальхи лару-тăру çирĕп мар пулнă тапхăрта виçĕ Правительствăн политикине пĕр-пĕринпе килĕштерсе пырасси пирки калаçса татăлнă.

Европăра йĕрке туса хурас тата халăхсен экономикăллă пурнăçне урăхлатса йĕркелес ĕçе çак майсемпе туса ирттермелле: нацизмпа фашизмăн юлашки йĕрĕсене пĕтерсе тăкма тата демократиллĕ учрежденисене халăхсем хăйсем суйласа илнĕ тăрăх туса хума ирĕке тухнă халăхсене пулăшу памалла. Мĕнпур халăхсене хăйсен правительствисен хăйсем кăмăлланă формине суйласа илме право парасси çинчен калакан Атлантика хартийĕн принципĕ тăрăх, халăхсене, агрессиллĕ нацисем пусмăра кĕртсе ӳкернĕскерсене, вĕсем ирĕке тухнă хыççăн, хăйсем тĕллĕн пурăнмалли правăна тата хăйсен самоуправленине юсаса ура çине тăратма пулăшмалла.

Ирĕке кăларнă халăхсене çав правăсене пурнăçа кĕртме май паракан условисене лайăхлатас шутпа, Европăри ирĕке тухнă кирек-мĕнле государствăра та е Европăри тĕнĕл сателличĕсем пулнă государствăра виçĕ Правительство, вĕсен шухăшĕпе лару-тăру çавăн пек тума хушнине кура, халăхсене пĕрле пулăшма пулаççĕ; вĕсем çак ĕçсенче пулăшма пулаççĕ: а) шалти мирĕн условийĕсене туса хума; в) кушари халăхсене пулăшас тĕлĕшпе васкавлă мерăсем йышăнма; с) халăхсен мĕнпур демократиллĕ элеменчĕсене анлăн пĕтĕçтерекен тата, ирĕклĕ суйлавсем ирттерсе, халăх ирĕкне тивĕçтерекен правительствăсене май килнĕ таран хăвăртрах туса хума тивĕçлĕ пулса тăракан вăхăтлăх правительство влаçĕ тума, тата д) кирлĕ çĕрте çав суйлавсене ирттермешкĕн пулăшма пулаççĕ.

Виçĕ Правительство тӳрремĕнех интересленекен ыйтусене пăхса тухнă чухне, вĕсем Пĕрлешнĕ Нацисемпе тата Европăри вăхăтлăх влаçсемпе е ытти правительствăсемпе калаçса татăлаççĕ.

Европăри ирĕке кăларнă кирек-мĕнле государствăра та е Европăри тĕнĕл сателличĕсем пулнă ытти кирек-мĕнле государствăра та, условисене кура, виçĕ Правительство шухăшĕпе çавăн пек ĕçсем тума кирлĕ пулса тăрсан, вĕсем çак Декларацире палăртнă пĕрлехи ответлăха пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе йышăнма кирлĕ мерăсем çинчен пĕр-пĕринпе çийĕнчех калаçса татăлаççĕ.

Çак Декларацире эпир Атлантика хартийĕн принципĕсене хамăр çирĕп ĕненсе тăнине, эпир Пĕрлешнĕ Нацисен Декларацийĕшĕн шанчăклă пулса тăнине тата мире юратакан ытти нацисемпе пĕрле миршĕн, хăрушсăрлăхшăн, этемлĕх ирĕклĕхĕшĕн тата пĕтĕмĕшлĕ ырă пурнăçшăн право принципĕсем çинче никĕсленсе тăракан пĕтĕм тĕнчери йĕркене туса хума хатĕр тăнине çĕнĕрен çирĕплетсе паратпăр.

Çак Декларацие пичетлесе кăларса, Виçĕ держава çакна шанса тăраççĕ: Франци Республикин Вăхăтлăх Правительстви çак сĕнӳ ĕçре пирĕнпе пĕрлешме пултарать».

VI.

Польша çинчен

Эпир Крымри Конференцие Польша ыйтăвĕ пирки тăракан пирĕн хушăри хирĕçӳсене татса пама пухăнтăмăр. Эпир Польша ыйтăвĕн пур енĕсене те сӳтсе-яврăмăр. Эпир вăйлă та ирĕклĕ, никама пăхăнман тата демократиллĕ Польша туса хурас тĕлĕшпе хамăр пĕр кăмăллă пулнине татах та тепĕр хут çирĕплетсе паратăмăр. Хамăр хушăра калаçнă хыççăн çак условисем пирки килĕшрĕмĕр: Польшăри Халăх Пĕрлĕхĕн Вăхăтлăх çĕнĕ правительствине ăна виçĕ тĕп держава йышăнма май паракан условисемпе туса йĕркелемелле.

Кун пирки çакăн пек килĕшӳ тунă:

«Хĕрлĕ Çар Польшăна ирĕке кăларнине пула унта çĕнĕ лару-тăру пулса тăчĕ. Çакă вăл Польшăн Вăхăтлăх Правительствине туса хума хушать. Çав Правительствăн Польшăн хĕвеланăç пайне ирĕке кăларнинчен пулнă никĕсрен анлăрах никĕс пулма тивĕçлĕ. Польшăн хальхи Вăхăтлăх Правительствине демократиллĕ анлăрах никĕс çинче, унта Польшăри хăйĕнчи демократиллĕ деятельсене тата ютçĕршывсенчи поляксене кĕртсе, урăхлатса йĕркелес пулать. Çав çĕнĕ Правительствăна вара Польшăри Халăх Пĕрлĕхĕн Вăхăтлăх Правительстви тесе чĕнмелле пулать.

В. М. Молотова, В. А. Гарриман господина тата Арчибальд К. Керр господина Польшăн хальхи Правительствине çӳлерехре кăтартнă никĕс çинче урăхлатса йĕркелес тĕлĕшпе, пуринчен малтан, хальхи Вăхăтлăх Правительствăн членĕсемпе тата Польшăри хăйĕнчи, çавăн пекех ютçĕршывсенчи поляксен демократиллĕ деятелĕсемпе Мускавра калаçса татăлма комисси вырăнне уйăрнă. Польшăри Халăх Пĕрлĕхĕн Вăхăтлăх Правительстви ирĕклĕ те нимĕнле чăрмавсăр суйлавсене май килнĕ таран хăвăртрах туса ирттерме тивĕçлĕ. Çав суйлавсене пĕтĕмĕшлĕ суйлав правин никĕсĕ çинче тата вăрттăн сасăласа туса ирттермелле. Çав суйлавсене нацизма хирĕçле мĕнпур партисемпе демократиллĕ партисем хутшăнмалла тата вĕсен хăйсен кандидачĕсене тăратмалла.

Польшăри Халăх Пĕрлĕхĕн Вăхăтлăх Правительствине çӳлерехре кăтартнă тăрăх тивĕçлипе туса йĕркелесен, Польшăн хальхи Вăхăтлăх Правительствипе дипломатиллĕ çыхăнусем тытакан ССР Союзĕн Правительстви, Пĕрлешӳллĕ Королевствăн Правительстви тата США Правительстви Польшăри Халăх Пĕрлĕхĕн çĕнĕрен тунă Вăхăтлăх Правительствипе дипломатиллĕ çыхăнусем тытма пуçлаççĕ тата пĕр-пĕрин патне посолсем яраççĕ. Çав посолсен доклачĕсем тăрăх тивĕçлĕ Правительствăсем Польшăри лару-тăру çинчен пĕлсе тăма пултараççĕ.

Виçĕ правительствăн пуçлăхĕсем çапла шутлаççĕ: Польшăн хĕвелтухăçĕнчи чикки Керзон линийĕ тăрăх пулмалла, çав линирен хăшпĕр районсенче пилĕк километртан пуçласа сакăр километра çити Польшăшăн усăллă пулса пăрăнни пулма пултарать. Виçĕ правительствăн пуçлăхĕсем çакна йышăнаççĕ: Польша çурçĕрпе хĕвеланăçĕнче çĕнĕрен чылай пысăк территори илме пултарать. Виçĕ правительствăн пуçлăхĕсем çапла шутлаççĕ: çавăн пек çĕрсене мĕн чухлĕ хушса парасси пирки тивĕçлĕ вăхăтра Польшăри Халăх Пĕрлĕхĕн çĕнĕ Правительствин шухăшне ыйтса пĕлмелле пулать, ун хыççăн вара Польшăн хĕвеланăçĕнчи чиккине мирлĕ конференцире татăклăн палăртса памалла пулать».

VII.

Югослави çинчен

Эпир Тито маршалпа Шубашич доктора вĕсем хăйсем хушшинче тунă Килĕшĕве халех пурнăçа кĕртме тытăнма тата çав Килĕшĕвĕн никĕсĕ çинче Вăхăтлăх Пĕрлешӳллĕ Правительство туса хума сĕнмешкĕн кирлĕ тесе шутларăмăр.

Югославин çĕнĕ Правительствине туса хурсанах, вăл çакăн çинчен пĕлтертĕр тесе сĕнме йышăннă:

1. Югослави Халăхне Ирĕке кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен фашизма хирĕçле Вечене Югослави Скупщинин членĕсене, тăшманпа пĕрле ĕçлесе хăйсен ятне яманскерсене, кĕртеççĕ, çапла вара Вăхăтлăх Парламент текен çĕнĕ орган туса хураççĕ;

2. Югослави Халăхне Ирĕке кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен фашизма хирĕçле Вече йышăннă законсене Учредительнăй Собрани çирĕплетме тивĕçлĕ.

Çавăн пекех тата Балканри ытти ыйтусене те пĕтĕмĕшлĕн пăхса тухнă.

VIII.

Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсен канашлăвĕсем

Конференци пынă мĕнпур тапхăрта, Правительство Пуçлăхĕсен тата Ют Çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсен кулленхи канашлăвĕсемсĕр пуçне, кунсерен Ют Çĕршыв Ĕçĕсен виçĕ Министрĕн уйрăм канашлăвĕсем те пулса пынă, çав канашлусене вĕсен советникĕсем хутшăннă.

Çав канашлусем питех те усăллă пулчĕç. Конференцире вара çакăн пирки килĕшӳ тунă: малашне Ют Çĕршыв Ĕçĕсен виçĕ Министрĕ пĕр-пĕринпе тăтăшах хутшăнса калаçмалла пултăр тесе, яланлăх механизм туса хума йышăннă. Çавăнпа та Ют Çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсем, кирлĕ пулса тăнă май, час-часах тĕл пулĕç, татăклăнрах каласан, кашни виçĕ е тăватă уйăх хушшинчех тĕлпула-тĕлпула калаçĕç. Çав канашлусем виçĕ столицăра черетлĕн пулса пырĕç, пĕрремĕш канашлăвĕ Лондонра, хăрушсăрлăх тĕлĕшпе ĕçлекен пĕтĕм тĕнчери организацие туса хурас тĕлĕшпе пухăнакан Пĕрлешнĕ Нацисен Конференцийĕ пулса иртнĕ хыççăн, пулмалла.

IX.

Мирлĕ пурнăçа организацилес ĕçре те, вăрçă вăхăтĕнчи пекех, пĕрлĕх тăвасси

Пирĕн Крымри канашлу çитес мирлĕ тапхăрта та, хальхи вăрçăри пекех, Пĕрлешнĕ Нацисене пĕр иккеленмесĕр çĕнтерӳ тума май панă пĕрлĕхе — тĕллевпе кĕрешӳри çак пĕрлĕхе сыхласа хăварма тата вăйлăлатма эпир пурте хатĕр тăнине çĕнĕрен çирĕплетсе пачĕ. Çакă вăл пирĕн Правительствăсен хăйсен халăхĕсем умĕнчи, çавăн пекех тата пĕтĕм тĕнчери халăхсем умĕнчи таса тивĕçлĕхлĕ пулса тăнине эпир ĕненетпĕр.

Пирĕн виçĕ çĕршыв тата мире юратакан ытти мĕнпур халăхсем пĕр-пĕрне ăнланса, малашне те пĕр-пĕринпе таччăн çыхăнса ĕçлесен кăна этемлĕхĕн чи аслă ĕмĕтне пурнăçа кĕртме пулать —нумай вăхăта пыракан çирĕп мир туса хума пулать. Çавăн пек мир çинчен Атлантика хартийĕнче çапла калан: «Мĕнпур çĕршывсенчи мĕнпур çынсене пĕтĕм пурнăç тăршшипех пĕр хăрамасăр, нуша курмасăр пурăнмалли мир туса памалла», тенĕ.

Çак вăрçăра эпир çĕнтерни тата эпир ĕмĕтленнĕ пĕтĕм тĕнчери организацие туса хуни сывăх çулсенчех çавăн пек мире туса йĕркелеме этемлĕхĕн мĕнпур историйĕнче малтанхи хут чи пысăк та паха майсем парать.

Уинстон ЧЕРЧИЛЛЬ.
Франклин Д. РУЗВЕЛЬТ.
И. СТАЛИН.

Мускава Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Государство Секретарĕ Эдвард Р. Стеттиниус господин килни

СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов чĕннипе февралĕн 12-мĕшĕнче Крымран Мускава Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Государство Секретарĕ Эдвард Стеттиниус господин килнĕ.

Стеттиниус господинпа пĕрле Пĕрлешӳллĕ Штатсен Совет Союзĕнчи посолĕ В. А. Гарриман килнĕ.

Центральнăй аэродромра Стеттиниус господина СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕ В. Г. Деканозов, Мускав Совечĕн Председателĕ Г. М. Попов, СССР Наркоминделĕн США отделĕн заведующийĕ С. К. Царапкин, СССР Наркоминделĕн Протокол Отделĕн заведующийĕн заместителĕ Г. И. Фомин, Мускав хулин коменданчĕ К. Р. Синилов генерал-лейтенант, çавăн пекех тата Пĕрлешӳллĕ Штатсен посольствин дипломатиллĕ сотрудникĕсем тата çар миссийĕн членĕсем.

Кĕтсе илнĕ вăхăтра хисеплĕ хурал тăратнă тата США-па СССР государство Гимнĕсене каланă. Аэродрома Пĕрлешӳллĕ Штатсен тата Совет Союзĕн флагĕсемпе илемлетнĕ.

Пĕрлешӳллĕ Штатсен Государство Секретарĕ Эдвард Р. Стеттиниус господин калани

Аэродромра Эдвард Р. Стеттиниус господин микрофон умĕнче çапла каланă:

«Эпĕ Мускавра пулнипе савăнатăп. Эпĕ çак вăхăта яланах кĕтсе тăнă. Хамăн пурнăçри хисеплĕ ĕçсенчен пĕри зал—Ленд-Лиз урлă Гарриманпа пĕрле Совет Союзне пулăшни пулнă.

Эпĕ сирĕн патăрта хăнара пулнăшăн питĕ савăнатăп».

Литература конкурсĕ

Мордва АССР Совнаркомĕ йышăннă тăрăх, Мордва совет писателĕсен союзĕн правленийĕ мордва художествăллă литературин лайăх произведенийĕсем (очерксем, калавсем, повеçсем, романсем, пьесăсем) тата Отечественнăй вăрçă темипе массăллăн юрламалли юрăсем (фронтра тылри паттăрла ĕçе кăтартакан юрăсем) çырас тĕлĕшпе конкурс туса ирттерме йышăннă.

Мордва (ирçе е мăкшă) чĕлхипе çырнă алçырăвĕсене почтăпа çак адреспа ямалла: Саранск хули, Мордва АССР-ĕ, Пичет çуртĕ, 4-мĕш хут, 52-мĕш пӳлĕм, Литература конкурсĕн жюрине. Алçырăвĕсене 1945 çулхи июлĕн 15-мĕшĕччен йышăнаççĕ.

Конкурса тăратнă лайăх произведенисемшĕн çакăн пек премисем памалла тунă: а) прозăпа çырнă произведенишĕн пĕрремĕш преми — 20 пин тенкĕ, иккĕмĕш премисем—15 пин тенкĕ тата виççĕмĕш премисем—икĕ преми 10-шар пин тенкĕ; б) юрăсемшĕн пĕрремĕш преми—10 пин тенкĕ тата иккĕмĕш премисем—икĕ преми 5-шер пин тенкĕ.

Конкурс итогĕсене 1945 çулхи августăн 30-мĕшĕнче пĕлтереççĕ.

ИКЕ СЕХЕТ ХУШШИНЧЕ 49 КУНХИ ЕÇ НОРМИНЕ ТУЛТАРНА

Нумаях пулмасть Чкалов ячĕпе тăракан заводри Владимир Великий стахановецăн паллă çитĕнĕвĕ çинчен пĕлтернĕччĕ. Хăйĕн станокĕпе ĕçлесе, вăл кулленхи нормине 5.000 процент тултарнă.

Партие кĕме хатĕрленсе, 19 çулхи стахановец ВКП(б) кандидатне кĕнĕ куна ĕçре паллă ситĕнӳ тунипе палăртма шутланă. Пĕр паха детале хатĕрлес тĕлĕшпе рационализациллĕ ĕç туса, вăл икĕ сехет хушшинче пĕр кунхи нормăна 4.850 процент тултарнă. Вăл кăларнă продукци заводăн пур цехĕсене те 10 кун хушши вăхăта ĕçлеме çитет. (ТАСС).

Хĕрлĕ Çара—парне

ОКТЯБРЬСКОЕ. Караньялĕнчи «Труд» промартель иртнĕ çулта ăнăçлă ĕçлесе тупăш илмелли плана 363 процент тултарнă, планран ирттерсе 387 пин тенкĕ тупăш илнĕ.

Хĕрлĕ Çарăн фронтри чаплă çĕнтерĕвĕсемпе хавхаланса, артель коллективĕ çав укçана Верховнăй Главнокомандованин фондне хывнă.

«Труд» промартель коллективĕ республикăри ытти артельсен коллективĕсене те хăйĕнчен пример илме чĕнет.

Выигрышсем тӳлесси икĕ хут ӳснĕ

ВАРНАР. Районра государство заемĕсен тата укçапа япаласен лотерейисен выигрышĕсене тӳлесси çултан çул ӳссе пырать. Районри перекет касси 1943 çулта 158 пин тенкĕ тӳленĕ пулсан, 1944 çулта 361 пин тенкĕ тӳленĕ. Çапла вара, выигрышсем тӳлесси çулталăкра икĕ хут ытла ӳснĕ. Иртнĕ çулта пысăк выигрышсем нумай пулнă.

Лайăх ĕçлекенсене—преми

СЕНТЕРВАРРИ. Иртнĕ çулхи IV-мĕш кварталта укçа-тенкĕ пухмалли плана ирттерсе тултарнăшăн районри финанс отделне Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне тата ĕçре уйрăмах палăрнă работникĕсене премилеме 15 пин тенкĕ укçа панăччĕ. Райсовет исполкомĕ çав укçапа районри чи лайăх финанс работникĕсене 11 çынна премилерĕ. 400-шер тенкĕ преми илнисем хушшинче райфо инспекторĕсем Егоровпа Кузин юлташсем пур. Райфо заведующине Анкудинов юлташа 1.500 тенкĕ, унăн заместительне Трещенков юлташа 700 тенкĕ парса премиленĕ.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Украинӑри 2-мӗш фронт ҫарӗсен командующине
Совет Союзӗн Маршалне МАЛИНОВСКИЕ
Фронт штабӗн начальникне
Генерал-полковника ЗАХАРОВА
Украинӑри 3-мӗш фронт ҫарӗсен командующине
Совет Союзӗн Маршалне ТОЛБУХИНА
Фронт штабӗн начальникне
Генерал-лейтенанта ИВАНОВА

УКРАИНАРИ 2-мӗш фронт ҫарӗсем, **УКРАИНАРИ** 3-мӗш фронт ҫарӗсем пулӑшнипе, уйӑх ҫурӑ хушши хупӑрласа пырса, пысӑк хулари йывӑр условисенче вӑйлӑн ҫапӑҫнӑ хыҫҫӑн паян, февралӗн 13-мӗшӗнче, **БУДАПЕШТРА** ҫавӑрса илнӗ тӑшман группировкине йӑлтах аркатса тӑкрӗҫ, ҫапла вара **ВЕНГРИ** столицине **БУДАПЕШТ** хулине—нимӗҫсен **ВЕНА** хули патнелле каймалли ҫулсем ҫинчи оборонин стратегиллӗ паха узелне—пӗтӗмӗшпех туртса илчӗҫ.

БУДАПЕШТ хулинче пынӑ ҫапӑҫусенче **УКРАИНАРИ** 2-мӗш фронт ҫарӗсем тӑшманӑн 110 пин салтакӗпе офицерне ытла нимӗҫ ҫарӗсен Будапештри группин командующийӗпе **ПФЕФЕР ВИЛЬДЕНБРУХ** генерал-полковникпа тата унӑн штабӗпе пӗрле тыткӑна илнӗ, ҫавӑн пекех тата хӗҫпӑшалпа тӗрлӗрен ҫар пурлӑхӗ нумай тытса илнӗ.

БУДАПЕШТ хулине туртса илессишӗн ҫапӑҫнӑ чухне ҫаксем чапа тухнӑ: **АФОНИН** генерал-майорӑн, **МАЛОГАРОВ** генерал-лейтенантӑн, **ШУМИЛОВ** генерал-полковникӑн, **ШЛЕМИН** генерал-лейтенантӑн, арми генералӗн **ЗАХАРОВӐН**, **ФИЛИППОВСКИЙ** генерал-майорӑн, **ЛУКИН** генерал-майорӑн, **БИРМАН** генерал-майорӑн, **ДЕРЕВЯНКО** генерал-майорӑн, **КОЛЧУК** генерал-майорӑн, **АКИМЕНКО** генерал-майорӑн, **ЛАНЬКО** генерал-майорӑн, **РУБАНЮК** генерал-лейтенантӑн, **ГРИГОРОВИЧ** генерал-майорӑн, **БИРЮКОВ** генерал-майорӑн, **ФОМЕНКО** генерал-лейтенантӑн, **БОБРУК**. генерал-майорӑн, **ПЕТРУШЕВСКИЙ** генерал-лейтенантӑн, **ГОРШКОВ** генерал-лейтенантӑн, **ВОСТРУХОВ** генерал-лейтенантӑн, **СОСЕДОВ** генерал-майорӑн, **КОВТУН-СТАНКЕВИЧ** полковникӑн, **ПЕРЕМАНОВ** полковникӑн, **ЧЕБОТАРЕВ** полковникӑн, **БУРИК** полковникӑн, **ЖАШКО** полковникӑн, **ФРОЛОВ** генерал-майорӑн, **ГУЩИН** полковникӑн, **НЕКРАСОВ** генерал-майорӑн, **БАЛДЫНОВ** полковникӑн, **ЛИЛЕНКОВ** генерал-майорӑн, **БАТЛУК** полковникӑн, **ПОДШИВАЙЛОВ** генерал-майорӑн, **ДУНАЕВ** полковникӑн, **СМИРНОВ** полковникӑн, **ГОРОБЕЦ** полковникӑн, **КАРАМЫШЕВ** генерал-майорӑн, **АФОНИН** генерал-майорӑн, **ДРЫЧКИН** полковникӑн, **ЦВЕТКОВ** генерал-майорӑн, **МОШЛЯК** полковникӑн, **КУКС** полковникӑн, **ПАРФЕНОВ** полковникӑн, **БРАНСБУРГ** полковникӑн, **ДЕРЗИЯН** полковникӑн, **БУНЯШИН** генерал-майорӑн, **ЧИЖОВ** полковникӑн, **СЕРГЕЕВ** полковникӑн, **НАЙДЫШЕВ** полковникӑн, **СОКОЛОВСКИЙ** генерал-майорӑн, **НАРГЕЛОВ** генерал-майорӑн, **ЛИРОВ** полковникӑн ҫарӗсем; артиллери генерал-полковникӗн **ФОМИНАН**, артиллери генерал-майорӗн **ШМАКОВАН**, артиллери генерал-майорӗн **КОТИКОВАН**, артиллери генерал-полковникӗн **НЕДЕЛИНАН**, артиллери генерал-лейтенанчӗн **ВОЗНЮКАН**, артиллери генерал-лейтенанчӗн **ПЕТРОВАН**, артиллери генерал-майорӗн **АЛЕКСЕЕНКАН**, артиллери генерал-майорӗн **ЦИКАЛАН**, артиллери генерал-майорӗн **ГУСАРОВАН**, артиллери генерал-майорӗн **ИВАНОВАН**, **ВОРОБЬЕВ** полковникӑн, **НОВИКОВ** полковникӑн, **ПОНОМАРЕВ** полковникӑн, **ТРЕХНОВ** полковникӑн, **АДАМЧИК** полковникӑн, **СТРОК** полковникӑн, **БРОВАРНИК** инженер-полковникӑн, **МИРОНОВ** полковникӑн, **КОРОТЕЕВ** полковникӑн, **КРЫЖЕВИЧ** полковникӑн, **СЕДАШ** полковникӑн, **ПАСТУХ** полковникӑн, **БОГУШЕВИЧ** полковникӑн, **ЛУПАКОВ** полковникӑн, **ГУЩИН** полковникӑн, **РОДИН** полковникӑн, **МОТОВ** полковникӑн, **КОМАРОВ** полковникӑн, артиллери генерал-майорӗн **РАТОВАН**, артиллери генерал-майорӗн **БОБРОВНИКОВАН**, **СОЛОВЬЕВ** полковникӑн, **ГРИШЕНКО** полковникӑн, **ЛЕОНОВ** полковникӑн, артиллери генерал-майорӗн **ЛАНЬШИНАН**, **РАЩИЦКИЙ** полковникӗн, **ГОЦАК** полковникӑн, **САЛАНСКИЙ** полковникӑн, **ЛУПАКОВ** полковникӑн, **ПОПОЛЗУХИН** подполковникӑн, **МАТЮХ** подполковникӑн, **ТАРАСЕНКО** подполковникӑн, **ПАВЛИК** подполковникӑн, **КОЗЯРЕНКО** подполковникӑн, **БРЕЕВ** подполковникӑн, **БОРОДИН** майорӑн, **ТРОНЕВ** подполковникӑн, **САМЧЕНКО** подполковникӑн, **ПРОХОРОВ** подполковникӑн, **БОРОДЬКО** подполковникӑн, **ШПЕК** подполковникӑн, **ВОРОНОВ** майорӑн артиллерисчӗсем; танковӑй ҫарсен генерал-полковникӗн **КУРКИНАН**, танковӑй ҫарсен генерал-лейтенанчӗн **АХМАНОВАН**. **СВИРИДОВ** генерал-лейтенантӑн, **РУССИЯНОВ** генерал-лейтенантӑн, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн **ГОВОРУЧЕНКАН**, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн **КАТКОВАН**, **РУМЯНЦЕВ** полковникӑн, **ТЯГЛОВ** полковникӑн, **АПОЛУНИН** майорӑн, **ГРИГОРЬЕВ** старши лейтенантӑн, **ЛАПИН** капитанӑн, **КУТУЗОВ** капитанӑн танкисчӗсем; авиаци генерал-полковникӗн **ГОРЮНОВАН**, авиаци генерал-полковникӗн **СУДЕЦАН**, авиаци генерал-лейтенанчӗн **СЕЛЕЗНЕВАН**, авиаци генерал-майорӗн **КОРСАКОВАН**, авиаци генерал-лейтенанчӗн **СТЕПИЧЕВАН**, авиаци генерал-лейтенанчӗн **ПОДГОРНЫЙАН**, авиаци генерал-майорӗн **КАМАНИНАН**, авиаци генерал-лейтенанчӗн **ТОЛСТИКОВАН**, авиаци генерал-лейтенанчӗн **ТУПИКОВАН**, авиаци генерал-лейтенанчӗн **ЛОГИНОВАН**, авиаци генерал-лейтенанчӗн **СЧЕТЧИКОВАН**, авиаци генерал-майорӗн **ЛЕБЕДЕВАН**, авиаци генерал-майорӗн **БЕЛИЦКИН**, авиаци генерал-майорӗн **ТИЩЕНКАН**, **РОМАНОВ** полковникӑн, **ЧАНПАЛОВ** полковникӑн, **ШУТЕЕВ** полковникӑн, **ЧИЖИКОВ** полковникӑн, **САПРЫКИН** полковникӑн, **СЕМЕНЕНКО** полковникӑн, **ЮДАКОВ** полковникӑн, **ТАРАНЕНКО** полковникӑн, **ГЕЙБО** полковникӑн, **ТЕРЕХОВ** полковникӑн, **ИВАНОВ** полковникӑн, **НЕДОСЕКИН** полковникӑн, **ДЕМЕНТЬЕВ** полковникӑн, **СМИРНОВ** полковникӑн, **ШАТИЛИН** подполковникӑн летчикӗсем; инженери ҫарӗсен генерал-лейтенанчӗн **ЦИРЛИНАН**, инженери ҫарӗсен генерал-полковникӗн **КОТЛЯРАН**, инженери ҫарӗсен генерал-майорӗн **ПЛЯСКИНАН**, инженери ҫарӗсен генерал-майорӗн **ИГНАТОВАН**, инженери ҫарӗсен генерал-майорӗн **ВАСИЛЬЕВАН**, техника ҫарӗсен генерал-майорӗн **КОСЕНКАН**, **МАЛОВ** полковникӑн, инженери ҫарӗсен генерал-майорӗн **ТЮЛЕВАН**, **КОВАЛЕНКО** полковникӑн, **ПАВЛОВ** полковникӑн, **НАСОНОВ** полковникӑн, **ЗАГРЕБИН** полковникӑн, **БАБУРИН** полковникӑн, **КАЛИНИЧЕНКО** полковникӑн, **НОМИНАС** полковникӑн, **ФОМИНЫХ** подполковникӑн, **ШЕЛУДЬКО** подполковникӑн, **ЯГОДИН** подполковникӑн, **МАРКОВ** майорӑн, **ДЮКОВ** инженер-майорӑн, **АНЗАУРОВ** подполковникӑн, **ФОМЕНКО** майорӑн, **РАГОЗИН** инженер-подполковникӑн, **КОРНЕЕВ** подполковникӑн саперӗсем; ҫыхӑну ҫарӗсен генерал-лейтенанчӗн **ЛЕОНОВАН**, ҫыхӑну ҫарӗсен генерал-лейтенанчӗн **КОРОЛЕВАН**, **БОРИСЕНКО** полковникӑн, авиаци генерал-майорӗн **МОРОЗОВАН**, **РЕВА** подполковникӑн, **ЖИЦ** подполковникӑн, **АГУПОВ** подполковникӑн, **ТОЛСТЫЙ** майорӑн, государство хӑрушсӑрлӑх полковникӗн **КАРПОВАН**, **ЕГОРОВ** полковникӑн, **КОТКОВ** полковникӑн связисчӗсем; **ДУНАЙ** ҫинчи ҫар флотилийӗн **ХОЛОСТЯКОВ** контр-адмирал, 2-мӗш рангри капитан **ДЕРЖАВИН** ертсе пыракан чаҫӗсемпе карапӗсем чапа тухнӑ.

Тунӑ ҫӗнтерӗве яланлӑха палӑртса хӑварас тесе, **БУДАПЕШТ** хулине туртса илессишӗн ҫапӑҫнӑ чухне уйрӑмах чапа тухнӑ соединенисемпе чаҫсене **«БУДАПЕШТСКИ»** тесе ят пама тата орденсемпе наградӑлама тӑратас.

Паян, февралӗн 13-мӗшӗнче, 21 сехетре пирӗн Тӑван ҫӗршыв столици **МУСКАВ**, виҫҫӗр ҫирӗм тӑватӑ тупӑпа ҫирӗм тӑватӑ хут пӗр харӑс персе, **УКРАИНАРИ** 2-мӗш фронтпа 3-мӗш фронтӑн паттӑр ҫарӗсене, Венгри столицине **БУДАПЕШТ** хулине туртса илнӗскерсене, Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан ҫарсене, **БУДАПЕШТ** хулине туртса илессишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче пулнӑскерсене, питӗ чаплӑ ҫапӑҫнӑшӑн **ТАВ ТАВАТАП.**

Хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн ҫапӑҫса вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене — вилӗм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ ***И. СТАЛИН.***

1945 ҫулхи февралӗн 13-мӗшӗ. № 277.

Совет Информаци Бюровӗнчен

ФЕВРАЛӖН 12-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Февралӗн 12-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем **БЫДГОЩ (БРОМБЕРГ)** хулинчен ҫурҫӗртерехре тата ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре, малалла тапӑнса пырса, **ШВЕЦ** хулине туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата халӑх пурӑнакан ытти 120 пункта ытла йышӑннӑ, вӑл шутра—ГРОСС ЦАППЕЛЕН, ГАЦКИ, ШИРОСЛАВ, ЕНДЖЕЕВО, БЛОНДЗМИН, ЛЮБИВО, ЛИБЕНАУ, ДРАУСНИЦ, ПЛЕТЦИГ ятлӑ пысӑк ялсем.

Тӗрӗслесе тухнӑ даннӑйсем тӑрӑх, тӑшманӑн **ТОРУНЬ** группировкине пӗтерсе тӑкнӑ чухне тата **ТОРУНЬ (ТОРН)** хулине туртса илнӗ чухне, февралӗн 1-мӗшӗнчен пуҫласа 9-мӗшне ҫитиччен, **БЕЛОРУССИРИ** 2-мӗш фронт ҫарӗсем 15.000 нимӗҫ салтакӗпе офицерне ытла тыткӑна илнӗ тата ҫакӑн пек трофейсем тытса илнӗ: тупӑсем — 270, пулеметсем—700, винтовкӑсемпе автоматсем—7.500, автомашинӑсем—1.200, ҫар хатӗрӗсем тиенӗ лавсем—800, лашасем—2.000, хӗҫпӑшал, боеприпас, апат-ҫимӗҫ тата ытти ҫар пурлӑх склачӗсем—202. Ҫапӑҫу хирӗнче тӑшман салтакӗсемпе офицерӗсен 13.000 вилли ытла выртса юлнӑ.

ШНАЙДЕМЮЛЬ хулинчен ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем ҫаплах наступлени туса пынӑ, нимӗҫ **ПОМЕРАНИЙӖНЧЕ ЧЮТЦ, КАЛЛИС, НОЙВЕДЕЛЬ** хулисене туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата тӑшманпа ҫапӑҫса, халӑх пурӑнакан ытти 40 пункта ытла йышӑннӑ, вӑл шутра — **АЛЬТ-КЕРТНИТЦ, БАЛЬСТЕР, ГУТСДОРФ, ВИЛДФОРТ** ятлӑ пысӑк ялсем. Февралӗн 11-мӗшӗнче пулса иртнӗ ҫапӑҫусенче пирӗн ҫарсем ку районра 1.300 нимӗҫ салтакӗпе офицерне ытла тыткӑна илнӗ.

УКРАИНАРИ 1-мӗш фронт ҫарӗсем, **ОДЕР** шывӗнчен хӗвеланӑҫнелле наступлени туса пырса, февралӗн 12-мӗшӗнче нимӗҫ **СИЛЕЗИЙӖНЧИ БУНЦЛАУ** хулине — ҫулйӗрсен паха узелне тата нимӗҫсен **БОБЕР** шывӗ ҫинчи оборонин вӑйлӑ тӗреклетнӗ пунктне—ҫапӑҫса туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата халӑх пурӑнакан ытти 100 пункта ытла туртса илнӗ, вӑл шутра—**РАУШВИЦ, ОТТЕРДОРФ, ГИСМАНСДОРФ, ОБЕР-ЛЕШЕН, КИТЛИЦ-ТРЕБЕН, НИДЕР-ШЕНФЕЛЬД, ТОМАСВАЛЬДАУ ВОЙТСДОРФ** ятлӑ пысӑк ялсем.

Февралӗн 10-мӗшӗпе 11-мӗшӗнче пулса иртнӗ ҫапӑҫусенче **УКРАИНАРИ** 1-мӗш фронт ҫарӗсем ку районра 3.000 нимӗҫ салтакӗпе офицерне яхӑн тыткӑна илнӗ тата аэродромсенче тӑшманӑн 100 самолетне 200 йывӑр планерне тытса илнӗ.

УКРАИНАРИ 4-мӗш фронт ҫарӗсем, Карпат тӑвӗсен тӑрӑхӗнчи сӑртлӑ-вӑрманлӑ вырӑнти йывӑр условисенче малалла наступлени туса пырса, февралӗн 12-мӗшӗнче **БЕЛЬСКО** хулине—ҫулйӗрсен пысӑк узелне тата нимӗҫсен **МОРАВСКА ОСТРАВА** хули патне пымалли вырӑнсенчи хӑватлӑ тӗреклетнӗ пунктне—штурмласа туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата, тӑшманпа ҫапӑҫса, халӑх пурӑнакан ытти 30 пункта ытла йышӑннӑ, вӑл шутра—**СТРУМЕНЬ, ГОЛЯСОВИЦЕ, ПРУХНА, РУДЗИЦА, ЯСЕНИЦА, ЯВОЖЕ, ВИЛЬКОВИЦЕ, БУЧКОВИЦЕ** ятлӑ пысӑк ялсем.

БУДАПЕШТРА пирӗн ҫарсем хулан хӗвеланӑҫ пайӗнче **(БУДАРА)**, хирӗҫ тӑнӑ тӑшмана ҫӗмӗрсе тӑкса, 200 квартал ытла туртса илнӗ, вӑл шутра Король замокӗпе кивӗ крепоҫа, вара каҫ пулса килнӗ тӗлелле хупӑрласа илнӗ тӑшман группировкин юлашкисене пӗтерсе тӑкасшӑн ҫапӑҫма тытӑннӑ. Февралӗн 11-мӗшӗпе 12-мӗшӗнче пулса иртнӗ ҫапӑҫусенче пирӗн ҫарсем хулан хӗвеланӑҫ пайӗнче **(БУДАРА)**, малталӑха панӑ даннӑйсем тӑрӑх, тӑшманӑн 30.000 салтакӗпе офицерне ытла тыткӑна илнӗ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче разведчиксем шыраса ҫӳренӗ тата чылай пунктра тӗллӗн-тӗллӗн ҫапӑҫнӑ.

Февралӗн 11-мӗшӗнче мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 125 танкне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 43 самолетне персе ӳкернӗ.

Кок-сагыз акса тӑвас тӗлӗшпе ӗҫлекен кадрсене ҫителӗклӗ хатӗрлер

Кок-сагыз акакан районсенче халӗ каучук паракан ӳсентӑрансене пӑхса ҫитӗнтерес тӗлӗшпе ӗҫлекен бригадирсемпе звеноводсене хатӗрлеҫҫӗ. Уйрӑмӑнах ҫак ӗҫе Елчӗк районӗнче лайӑх организациленӗ. Кунта 10 кунлӑх курс витӗр кок-сагыз туса илес тӗлӗшпе ӗҫлекен бригадирсем пулма 31 ҫын, звеноводсем пулма 5 кунлӑх курс витӗр 93 ҫын вӗрентсе кӑларнӑ. Унсӑр пуҫне, кок-сагыз плантацийӗсенче ӗҫлекен колхозниксене 779 ҫынна агрокружоксене явӑҫтарнӑ.

Ҫак паха ӗҫе кунта райҫӗрӗҫ пайӗн главнӑй агрономӗ П. Щипцов юлташ ертсе пырать. Вӑл ҫак ӗҫе иртнӗ ҫул та лайӑх туса пынине шута илсе, ӑна ССР Союзӗн Резина промышленность Халӑх Комиссариачӗ 1600 тенкӗ укҫа парса премиленӗ. Ҫак районри каучуковод-агрономсем Никитинпа Маркова юлташсем те кадрсем хатӗрлес енӗпе лайӑх ӗҫлеҫҫӗ.

Кок-сагыз агротехникине вӗренес ӗҫе Чкаловски районра лайӑх йӗркеленӗ. Кунта пӗр январь уйӑхӗнче кӑна 23 бригадир вӗрентсе хатӗрленӗ тата агрокружоксене 650 колхознике явӑҫтарнӑ.

Анчах та ҫак питех те кирлӗ ӗҫе Вӑрмар районӗнче хисеплемеҫҫӗ-ха. Кунта ҫак вӑхӑта ҫитсе те кок-сагыз туса илес тӗлӗшпе ӗҫлекен бригадирӗсем валли курс организацилемен, колхозниксене те ҫав ӗҫе вӗрентмеҫҫӗ. Вӑрмар районӗн ҫӗрӗҫ пайӗ ҫак ӗҫе кая хӑварса пырать.

Канаш районӗнче кок-сагыз туса илес тӗлӗшпе ӗҫлекен бригадирсене урӑх ӗҫе янӑ. СССР Совнаркомӗ 1944 ҫулхи июлӗн 22-мӗшӗнче йышӑннӑ постановлени тӑрӑх, кок-сагыз туса илес тӗлӗшпе ӗҫлекен колхозниксене вӑрман хатӗрлес ӗҫе, ҫавӑн пекех промышленноҫра ӗҫлеме те ямалла мар. Канаш районӗнче правительствӑн ҫак постановленине кирлӗ пек пурнӑҫламаҫҫӗ. Унта кок-сагыз туса илес тӗлӗшпе ӗҫлекен бригадирсене вӑрман хатӗрлеме янӑ. Райҫӗрӗҫ пайӗн главнӑй агрономӗ Лаптев юлташ ҫакӑн пирки нимӗн те тумасть.

Чурачӑк районӗнче те кок-сагыз тӗлӗшпе ӗҫлекен кадрсене хатӗрлес енӗпе ҫителӗксӗр ӗҫлеҫҫӗ. Ҫӗрӗҫ органӗсенче ӗҫлекенсем, «Расткаучук» Заготпункчӗн заведующийӗсемпе ялхуҫалӑх специалисчӗсем ҫак ӗҫ ҫине кирлӗ пек пӑхмаҫҫӗ, вӑл хӑй тӗллӗнех пулса пырасса шанаҫҫӗ.

1945 ҫулта пысӑк тухӑҫлӑ кок-сагыз туса илесси ҫав ӗҫе аван пӗлекен ҫынсем пурринчен нумай килет. Кок-сагыз акакан районсем февраль тата март уйӑхӗсенче кок-сагыз туса илес тӗлӗшпе ӗҫлекен кадрсене кирлӗ пек хатӗрлесе ҫитересси-шӗн пикенерех ӗҫлемелле. Кашни колхозрах кок-сагыз агротехникине лайӑх пӗлекен ҫынсем пулмалла.

И. ЕФИМОВ,
«Расткаучук»-ӑн республикӑри кантурӗн управляющийӗ.

1944—1945 ҪУЛХИ КӖРКУННЕПЕ ХӖЛЛЕХИ ВАХАТРА ЧУГУН ҪУЛ ВАЛЛИ ВУТА ХАТӖРЛЕСЕ ТУРТТАРМАЛЛИ ПЛАНА 1945 ҪУЛХИ ФЕВРАЛӖН 10-мӗшӗ ТӖЛНЕ МӖН ЧУХЛӖ ТУЛТАРНИНЕ КАТАРТАКАН СВОДКА

Районсем тата вӑрман хатӗрлекен организацисем	Плана тултарнӑ (процентпа)		Мӗнле вырӑн йышӑннӑ	
	Турттарас енӗпе	Хатӗрлес енӗпе	Турттарас енӗпе	Хатӗрлес енӗпе
Куславкка	108,4	103,6	1	2
Первомайски	107,1	93,2	2	4
Сӗнтӗрвӑрри	100,7	103,5	3	3
Чурачӑк	98,7	82,9	4	7
Ҫӗмӗрле	95,7	117,5	5	1
Комсомольски	93,0	59,4	6	22
Вӑрмар	82,6	54,1	7	25
Чкаловски	82,4	75,8	8	9
Шӑхасан	80,8	70,3	9	14
Хӗрлӗ Чутай	78,1	92,8	10	5
Шупашкар	76,9	82,3	11	8
Советски	76,0	68,0	12	17
Йӗпреҫ	76,1	72,5	13	12
Канаш	75,8	69,6	14	15
Муркаш	75,8	68,3	15	16
Октябрьски	71,5	74,2	16	11
Калинино	70,8	89,6	17	6
Ишлей	68,7	75,3	18	10
Елчӗк	66,0	55,9	19	24
Вӑрнар	64,5	71,3	20	13
Етӗрне	59,3	58,1	21	23
Ҫӗрпӳ	58,9	60,4	22	21
Кувакино	58,8	68,0	23	18
Элӗк	57,5	49,1	24	27
Сӗнтӗр	55,0	52,6	25	26
Тӑвай	50,7	60,5	26	20
Красноармейски	49,6	63,4	27	19
* * *				
Улатӑр вӑрман хуҫалӑхӗ	113,2	103,8	1	1
Кире вӑрман хуҫалӑхӗ	103,7	87,4	2	2
Йӗпреҫ вӑрман хуҫалӑхӗ	98,7	82,9	3	4
Алтышево вӑрман промхозӗ	89,9	62,9	4	13
Кире вӑрман пункчӗ	85,2	86,7	5	3
Канаш вӑрман промхозӗ	82,8	56,9	6	14
Вӑрнар вӑрман хуҫалӑхӗ	80,8	70,3	7	8
Ҫӗмӗрле вӑрман хуҫалӑхӗ	75,9	68,2	8	10
Йӗпреҫ вӑрман промхозӗ	68,6	70,3	9	9
Хӗрлӗ Чутай вӑрман пункчӗ	67,9	73,8	10	7
Вӑрнар вӑрман промхозӗ	67,3	80,4	11	5
Йӗпреҫ участокӗ	67,3	77,5	12	6
Ҫӗмӗрле вӑрман пункчӗ	64,6	64,8	13	12
Буинск вӑрман промхозӗ	68,0	67,5	14	11

УЗБЕКИСТРАНРА УЙХИР ӖҪӖСЕМ ПУҪЛАННА

Узбекистанӑн кӑнтӑрти районӗсенче ҫу-раки пуҫланнӑ. Сурхан-Дарьински тата Кашка-Дарьински облаҫсенче 11.000 гектар урпапа тулӑ акнӑ. (ТАСС).

КОМСОМОЛАН ТӖП ШКУЛНЕ УҪНИ

Февралӗн 11-мӗшӗнче Мускав ҫывӑхӗнчи Вешнякинче комсомолӑн тӗп шкулӗ уҫӑлнӑ, вӑл ВЛКСМ Центральнӑй Комитечӗн шкулӗ пулса тӑрать. Шкулта комсомолӑн ертсе пыракан кадрӗсене хатӗрлеҫҫӗ.

Шкулта ҫулталӑк ҫурӑ вӗрентмелле. Программӑра ВКП(б) историйӗ, СССР халӑхӗсен историйӗ тата политика экономийӗ пысӑк вырӑн йышӑнса тӑраҫҫӗ. Унсӑр пуҫне, ют ҫӗршыв чӗлхисем, педагогика вӗренмелле тата ҫарпа физкультура тӗлӗшпе хатӗрленмелле.

Вӗренме 250 ҫын илнӗ. Вӗсем хушшинче комсомолӑн обком, райком тата горком секретарӗсем, Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑра активлӑн кӗрешнӗ ҫынсем, ҫӗршывӑн нимӗҫ захватчикӗсем оккупациленӗ вырӑнӗсенче вӑрттӑн ӗҫленӗ комсомол организацийӗсен руководителӗсем. (ТАСС).

ГУСЕНИЦАЛЛА ҪӖНӖ ЙЫШШИ ТРАКТОР

Алтайри трактор заводӗнче гусеницӑллӑ ҫӗнӗ йышши трактора сӑнаса пӑхнӑ.

Ҫӗнӗ трактор ҫинче карбюраторлӑ двигатель вырӑнне 58 лаша вӑйлӗ дизельмотор лартнӑ. Ҫӗнӗ йышши трактор киввинчен ҫакӑнпа уйрӑлса тӑрать: вӑл перекетлӗрех, унӑн пайӗсем вӑраха пыраҫҫӗ, ӑна тыткалама меллӗрех тата вӑл илемлӗрех.

Хӗвеланӑҫ Европӑри вӑрҫӑ ӗҫӗсем

ЛОНДОН, февралӗн 12-мӗшӗ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллӗ вӑйӗсен верховнӑй командованийӗн штабӗ пичетлесе кӑларнӑ пӗлтерӳре каланӑ тӑрӑх, союзниксен ҫарӗсем Голландипе Германи чиккинче, Неймегенран хӗвелтухӑҫнерехре, Милинген хулине йышӑннӑ. Милингенран кӑнтӑрарахра, Германи территорийӗнче, Кеекен хулине йышӑннӑ.

Германин аркатса тӑкнӑ Клеве хулинче ҫапӑҫусем пыраҫҫӗ. Рейхсвальд вӑрманӗнче союзниксем Оттерсем хулине йышӑнса илнӗ.

Рейн облаҫӗнче, Рур шывӗнчен ҫурҫӗрарехре тата хӗвеланӑҫнерехре, Шваммен-ауэль пӗвипе Гаймбах хушшинчи района тӑшмантан тасатнӑ. Прюмран хӗвеланӑҫнерехре тата кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре (Рейн облаҫӗ) союзниксен чаҫӗсем Штейнмелена тата Вейнсфельда йышӑннӑ.

Кунтан кӑнтӑртарахра союзниксен ҫарӗсем Фершвейлер хулин хӗррине ҫитнӗ.

Страсбургран кӑнтӑртарахра (Эльзасра), Друзенхейм ҫывӑхӗнче, хаяр ҫапӑҫусем пыраҫҫӗ.

Союзниксен авиацийӗ тӑшманӑн ҫапӑҫу районӗнчи ҫар объекчӗсене тата тӑшман ҫарӗсен тылӗнчи ҫар объекчӗсене тапӑннӑ.

ЛОНДОН, февралӗн 12-мӗшӗ. (ТАСС). Союзниксен Вӑтаҫӗр тинӗс тавраҫӗнчи хӗҫпӑшаллӑ вӑйӗсен штабӗ пичетлесе кӑларнӑ пӗлтерӳре ҫапла каланӑ: 5-мӗш армин тинӗс хӗрринчи секторӗнче юлашки темиҫе кун хушшинче пулса иртнӗ вырӑнти ҫапӑҫусем вӗҫленнӗ. Тыткӑна нумай ҫын илнӗ тата паха информаци тупнӑ. Фронтӑн ытти участокӗсенче патрульсем активлӑн ҫапӑҫнӑ.

ГЕРМАНИ СТОЛИЦИНЕ НЮРНБЕРГ ХУЛИНЕ КУҪАРНИ ҪИНЧЕН КАЛАКАН ХЫПАРСЕМ

ЛОНДОН, февралӗн 11-мӗшӗ. (ТАСС). Англин информаци министерстви ҫапла пӗлтерет: тӑшман аллинчен илнӗ хыпарсем тӑрӑх, февралӗн 3-мӗшӗнчен пуҫласа Германи столицине Нюрнберг хулине куҫарнӑ.

ПӖТӖМ ТӖНЧЕРИ ПРОФСОЮЗСЕН КОНФЕРЕНЦИЙӖ

ЛОНДОН, февралӗн 11-мӗшӗ. (ТАСС). Ӗнер пӗтӗм тӗнчери профсоюзсен конференцийӗнче Ситрин доклачӗ тӑрӑх прениссем пынӑ. Америкӑри производстваллӑ профсоюзсен конгресӗн (КПП) секретарӗ Кэри хӑй Ситрин тунӑ сӗнӳсемпе пӗтӗмӗшпех килӗшни ҫинчен пӗлтернӗ. Кэри ҫапла каланӑ: КПП, Ситрин пекех, нацизмпа фашизмӑн пур йӗрӗсене те тӗпренех пӗтерсе хумалли мерӑсем йышӑнма сӗнет, тенӗ.

Франци делегачӗ Альбер Газье ҫапла каланӑ: организациленӗ рабочисем хутшӑнмасӑр, мир условийӗсем ҫинчен тата мирлӗ килӗшӳ тӑвасси ҫинчен калаҫу та пулма пултараймасть. Союзлӑ ҫӗршывсенчи халӑхсене фашизмӑн ҫӗнӗ формисенчен сыхлантарса, Газье ҫапла каланӑ: фашистла идеологи Германире кӑна мар. Японипе Аргентинӑра та пур. Вӑрҫӑ пӗтнӗ тӗле, тен эпир ҫӗнӗ идеологисем пуррине курӑпӑр. Урӑх ятлӑ пулин те, вӗсем, чӑннипе илсен, фашистла идеологисем пулма пултарӗҫ. Ҫав идеологисене пирӗн пӗтӗмпех каклаcа тӑкмалла.

Ломбардо Толедано делегат ҫапла каланӑ: Латинла Америкӑри ӗҫхалӑхӗн конференцийӗ резолюци йышӑннӑ, унта нацистла ҫар преступникӗсене хаяр наказани пама ыйтнӑ. Кунта ҫав преступниксем гражданла ҫынсем е ҫар ҫыннисем пулнине уйӑрса тӑма кирлӗ мар. Германие наказани панӑ хыҫҫӑн ытти ҫӗршывсенче фашистла режим тӑрса юлсан, ӗҫ усӑсӑр пулнӑ пулӗччӗ.

«Фашизм тата нацизм,—тенӗ Толедано, — Германипе Италири ахаль партисем ҫеҫ пулмаҫҫӗ. Фашизм вӑл политикӑллӑ идеологи тата режим пулса тӑрать. Ҫав идеологие аркатса тӑкмасӑр, эпир фашистла хӑрушлӑха пӗтерме те пултараймастпӑр. Ҫавӑн пиоки те демократи чӑн-чӑн вӑй пулса тӑмалла».

Индири ӗҫ федерацийӗн делегачӗ Мукерджи, мирлӗ килӗшӳ ҫинчен Ситрин каланӑ сӑмах пирки ҫапла каланӑ: «Германие тытса тӑнӑ чухне Германири политикӑллӑ юхӑма контроль туса тӑрассине администраци органӗсем хӑйсем ҫине илмелле. Ҫапла тунипе Германире социализмлӑ тата демократиллӗ профсоюз юхӑмне аталантарма пулӑшмалла. Ҫакӑ вӑл Европӑна ҫӗнетсе урӑхлатас ӗҫӗн уйӑрӑлми пайӗ пулса тӑрать».

ЮГОСЛАВИРИ РЕГЕНТСТВО ЫЙТАВӖ ПИРКИ

БЕЛГРАД, февралӗн 10-мӗшӗ. (ТАСС). Югослави Халӑхӗн Ирӗклӗх Комитечӗн информаци тӗлӗшпе ӗҫлекен уполномоченнӑйӗ Владислав Рыбникар союзниксен пичет представителӗсемпе калаҫнӑ чухне ҫапла пӗлтернӗ: «Юлашки вӑхӑтра Англи хаҫачӗсенче король регент советне Симович генералпа Шутея кӗртме сӗннипе Тито маршал килӗшменни ҫинчен калакан пӗлтерӳсем пичетленнӗ. Чӑннипе илсен Тито маршал Шутей кандидатурипе кӑна килӗшмест. Шутей вӑл Цветкович-Мачек правительствинче министр пулнӑ. Ҫав правительство Югослави тройственнӑй пакт ҫумне хутшӑнасси ҫинчен калакан протокол ҫине алӑ пуснӑ».

БЕЛЬГИРЕ ҪӖНӖ ПРАВИТЕЛЬСТВО ТУНА

ЛОНДОН, февралӗн 12-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Ван Акер пресс-конференцире Бельгире ҫӗнӗ правительство туса хуни ҫинчен пӗлтернӗ. Ҫӗнӗ правительствӑна католикла чиркӗвӗн 6 представителӗ, 5 социалист, 4 либерал, 2 коммунист тата партире тӑман пӗр ҫын кӗнӗ. Премьер-министр—Ахилл Ван Акер, Ют ҫӗршыв ӗҫӗсен министрӗ тата премьер-министр заместителӗ—Поль Анри Спаак.

Ҫар кабинетне 6 министр кӗмелле. Вӑл кабинета кам-кам кӗрессине министрсен совечӗ кӑтартса парӗ. Ҫав кабинета католикла чиркӗвӗн икӗ представителӗ, икӗ социалист, пӗр либерал тата пӗр коммунист кӗмелле.

ТӲРЛЕТНИ

«Чӑваш Коммуни» хаҫатӑн февралӗн 7-мӗшӗнчи номерӗнче 1-мӗш страницӑра пичетленсе тухнӑ Ӳкерчӗк айӗнчи сӑмахсене ҫапла вуламалла: «Ӳкерчӗк ҫинче: Сӗнтӗр районӗнчи «Коминтерн» колхозри колхозница С. Л. Богданова хӑйӗн ачисемпе. Сакӑр ача ҫуратса ӳстернӗшӗн ӑна Правительство «Ача амӑшӗн мухтавӗ» ятлӑ II-мӗш степень орденпа наградӑланӑ».

Ответлӑ редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Шупашкарти больницӑна хуҫалӑх тӗлӗшпе ӗҫлекен тата чирлӗ ҫынсене пӑхакан работниксем кирлӗ.

ПАРТИ ПУРНӐҪӖ

Малта пыракан ӗҫҫыннисем парти ретне кӗреҫҫӗ

ЙӖПРЕҪ. Районри нумай колхозсенче политшкулсем ӗҫлеҫҫӗ. Ҫав шкулсене коммунистсемпе комсомолецсем кӑна мар, колхозниксемпе колхозницӑсем те вӗренме ҫӳреҫҫӗ. Ӗҫҫыннисем хушшинче массӑллӑ-политикӑллӑ ӗҫе лайӑхлатнине пула, 1944 ҫулта парти ретне кӗресси те, унччен хи ҫулхипе танлаштарсан, нумай ӳсрӗ. Иртнӗ ҫулта парти ретне пурӗ 137 ҫынна, вӑл шутран 69 ҫынна ВКП(б) членне, 68 ҫынна кандидата илнӗ. Ку тӗлӗшпе уйрӑмах вӑрманпромхозри парторганизаци (секретарӗ Бельский юлташ) лайӑх ӗҫлет. Унта ВКП(б) членне 9 ҫынна, кандидата 7 ҫынна илнӗ. Ҫавӑн пекех Пысӑк Упакассинчи парторганизацире те (секретарӗ Никитин юлташ) парти ретне 8 ҫынна илнӗ. Асӑннӑ организацисенче малта пыракан рабочисене тата колхозниксемпе колхозницӑсене парти ретне илес ӗҫе политикӑллӑ ӗҫ вырӑнне хурса хаклаҫҫӗ, ӑна предприятири, колхозри ӗҫсемпе пӗлсе ҫыхӑнтарса пыраҫҫӗ.

Нумай юлташсем ВКП(б) ретне кӗнӗ хыҫҫӑн татах та лайӑхрах тӑрӑшарах ӗҫлеме тытӑнаҫҫӗ, ӗҫ нормисене унченхинчен ирттерсе тултараҫҫӗ. Г. Фадеев юлташ Буинск вӑрманпромхозӗнче мастер пулса ӗҫлет. ВКП(б) членӗн кандидатне илнӗ хыҫҫӑн вӑл ӗҫ нормине 150 процентран ирттерсе тултаракан пулчӗ. Ҫав вӑхӑтрах вӑл хӑйӗн политикӑллӑ пӗлӗвне ӳстерес тӗлӗшпе те тӑрӑшса ӗҫлет. ВКП(б) членӗн кандидачӗ С. Кардышева колхозница тӑватӑ ҫул хушши фермӑра тӑрӑшса ӗҫлет. Унта сурӑхсем ӗрчетмелли плана ытлашшипех тултарнӑ. Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗн Президиумӗ С. Кардышева юлташа Хисеплӗ грамота парса наградӑларӗ. Иртнӗ ҫулта Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗн Президиумӗ 13 коммуниста Хисеплӗ грамотӑпа наградӑланӑ. 2 коммунист орденсемпе медальсем илме тивӗҫлӗ пулчӗҫ.

Парти ретне ӳстерес тӗлӗшпе уйрӑм коммунистсем тимлӗн тӑрӑшса ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсем производствӑра малта пыракан ҫынсемпе ҫирӗп ҫыхӑнса тӑраҫҫӗ, вӗсене политика тӗлӗшӗнчен ӳсме пулӑшаҫҫӗ, парти ретне кӗме хатӗрлеҫҫӗ. ВКП(б) членӗсем Н. Бельский юлташ 16 ҫынна, М. Марков юлташ 13 ҫынна парти ретне кӗме хатӗрленӗ, рекомендацисем панӑ. Вӗсем хӑйсем рекомендацисем панӑ ҫынсемпе яланах ҫыхӑну тытаҫҫӗ, вӗсем партие кӗнӗ хыҫҫӑн мӗнле ӗҫленипе, хӑйсен пӗлӗвне мӗнле ӳстерсе пынипе интересленеҫҫӗ.

Ҫав вӑхӑтрах хӑшпӗр парторганизацисем парти ретне ӳстерес тӗлӗшпе ҫителӗксӗр ӗҫлеҫҫӗ-ха. «Молния» тата «Красный фронтовик» колхозсем ҫумӗнчи парторганизацисем ҫулталӑк хушшинче те пӗрер ҫынна кӑна парти ретне илнӗ. «Молния» колхозри комсомол организацийӗ лайӑх ӗҫлекенсенчен пӗри шутланса тӑрать, унта 15 ҫын. Апла пулин те, ку организацирен пӗр комсомолеца та ВКП(б) ретне илмен. Ҫавӑн пек тӗслӗхсем районри ытти организацисенче те пур. Ҫавна пула ӗнтӗ районра ҫулталӑк хушшинче те 34 комсомолеца кӑна парти ретне илнӗ.

Хӑшпӗр коммунистсем малта пыракан комсомолецсемпе ӗҫҫыннисем хушшинче сахал пулаҫҫӗ, вӗсемпе ӗҫлемеҫҫӗ. Ҫапла вара вӗсем парти ретне кӗме тивӗҫлӗ ҫынсене курмаҫҫӗ. Кирлӗ чухне пулӑшни, рекомендацисем пани ҫук. Ҫавӑн пек коммунистсен шутне Е. Елагина, Ф. Чугунова юлташсене кӗртмелле. Вӗсем юлашки икӗ ҫул хушшинче пӗр ҫынна та рекомендаци паман.

Кандидатран парти членне куҫарас ӗҫре те ҫитменлӗхсем пур-ха. Паянхи кун районра 32 ҫынӑн кандидатра тӑмалли срокӗ иртсе кайнӑ. Ку тӗлӗшпе уйрӑмӑнах МТС ҫумӗнчи парторганизацире (секретарӗ Мамонтов) юлташ ҫителӗксӗр ӗҫлеҫҫӗ. Унта 7 кандидатӑн члена куҫмалли срокӗсем тахҫанах тухнӑ. Апла пулин те, ҫав юлташсем парти членне куҫас тӗлӗшпе нимӗн те тумаҫҫӗ. Парторганизаци те вӗсемпе ҫителӗксӗр ӗҫлет.

Отечественнӑй вӑрҫӑ ҫулӗсенче пирӗн парти ретне малта пыракан колхозниксемпе колхозницӑсем, ӗҫҫыннисем чылай хутшӑнчӗҫ. Ҫакӑ вӑл колхозсен, предприятисен ӗҫне лайӑхлатма нумай пулӑшрӗ, колхозниксемпе колхозницӑсен тата рабочисен чухӑҫлӑ ӗҫлес хаваслӑхне темиҫе хут ӳстерчӗ.

Малта пыракан ҫынсене парти ретне илессине хуҫалӑх ӗҫӗсемпе пӗлсе ҫыхӑнтарса пынипе нумай колхозсемпе предприятисем государство умӗнчи обязательствӑсене срокчен тултарчӗҫ. Коммунистсем тӑван ҫӗршывпа фронта пулӑшас тӗлӗшпе ырми-канми ӗҫлеҫҫӗ.

П. КУРАКОВ
ВКП(б) Йӗпрес райкомӗн оргинструкторски отделӗн заведующийӗ.

В. И. Ленин брошюри

Чӑвашгосиздат В. И. Ленинӑн «Пурте продовольствипе транспорт ӗҫне» ятлӑ статьине чӑвашла куҫарса уйрӑм брошюра туса кӑларчӗ. Кӗнекен тиражӗ—2000 экземпляр, хакӗ 30 пус.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 6, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторан — 0—67, заместительпе секретарен — 4—26, парти пурнӑҫ пайӗн 3—97, промышленность пайӗн — 3—99, ялхуҫалӑх пайӗн — 5—31, издательство конторин — 0—22.

НТ 00276 Типографи № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР Заказ № 2. Тираж 16.000